„Канаш“ хаҫат сумӗнҫе тухаҫ

КАПКĂН

7-мӗш №

АПРЕЛ, 1926 ҫ. 2-мӗш ҫул тухаҫ.

Ҫул-кӗперсене йусатпар.

— Мӗншӗн ес ӗҫлеместӗн?
— Мана ҫул кирдӗ мар. Епӗ сукмакпа та ҫӳреме пултаратӑп.

Ӑнҫапа хӑҫан.

Пĕрре шулӗра кĕмĕлсенҫен тунӑ хушпуллӑ, сӑркасем, ҫеҫтенкĕсем, теветсем ҫакса тултарнӑ кӑкӑрлӑ, шупка кӑвак кĕпеллĕ сарӑ хĕрарӑм. шупӑр тӑлӑнӑ вырӑс тутри ҫыхнӑ хура ҫӳҫлĕ Шупашкар уйесĕнҫи ҫӑваш маткине тĕл пулаӗ те, хилиҫҫен пĕр-пĕрне курмансерсем калаҫма тытӑнаҫҫĕ.



— Кӑҫта тата? тет пирвайхи.

— Ҫок, мавӑн нимĕн те кĕҫтемест, тет тӑнланмасӑр вирйал матки, кĕҫтесен те, пор кĕҫтенĕ вырӑна ӑҫтан кĕҫтесе ҫитерен. Пирĕн ĕҫĕ нумай. Уна ту, куна ту. Ёҫлесех кӑн тухаӗ.

— Уна йатлӑ ту пуриха сирĕн? Курасҫĕ ӑна. Тинке тухрĕ кунта килсе. Килни харама ан йултӑр тесе, ҫав ту ҫине те улӑхасҫĕ.

— Улӑхĕ пирĕн сахалҫке. Вутӑ пулаймаӗ.

— Пирĕн ҫывӑхра вӑрман сахалтарах пирки, вутӑ ҫуккипе тинке тухаӗ вара. утӑ нумай.

—Тенкĕ туха ? Вутӑ вӑрманта тунӑшӑн укҫа параҫҫĕ и мĕн сирĕн? Епĕр апла мар. Вӑрманта вутӑ тума пĕлместпĕр, вотӑ тума пĕлетпĕр.

— Хаҫ кӑна „анҫах" терĕв. Мĕн тени пулаӗха вӑл?

— Анҫах-и? Анҫаха пĕлместни? Ӑҫти ҫӑва тĕпĕнҫи ҫын ес?

— Ҫӑва тухасси тухрӑмӑр та, анҫах теме каҫан кĕҫĕтме пуҫларĕ.

— Ай-уй, мĕнле калаҫан? Намӑсна ӑҫта ҫикен? Каҫҫӑ корсан мĕн калĕ.

— Каҫҫа каймастӑп епĕ. Йĕкĕтсем ҫук, йурӑхлисем. Пулсан та тете йевĕрлисем.

— Тетеле йернĕ тетĕн? Мĕн йернĕ? Хӑш шуа лартнӑҫҫӗ? Полӑ йернĕ пулсен пĕҫерсе ҫима пит лайӑх ĕнтĕ. Нумайрах кĕрнĕ полсан килйышсене лайӑх ваҫӑ полаӗ.

— Ваҫӑ! Майра хĕрĕи?

— Майра хĕрне те ҫитартӑм. Ҫӑпала туллийех ӑсса ҫийет. Пит...

— Есир йашкана ҫӑпалапа ҫийеттĕри? Епир ҫӑпалапа йашка кӑна антаратпӑр. Тĕлĕнмелле сиртен!

— Серте те йаратпӑр. Хӑш ҫохне полтран йарсан та лайӑх апат пулаӗ. Умла йаран...

— Хыҫлӑ йамастӑн-и тата?

— Хыҫлӑ йарнине илтмен. Кмоко хотан... Ашне йаран.

— Ашшĕне шыв ӑсма йаратӑн-и? Пирĕн атте пасара какай илме кӑна кайаӗ. Шывне хамах кӳретĕп. Какайĕ кӑҫуне хакланса кайрĕҫке.

— Мĕнле хӑйаматла йапала вӑл какай? Хаклӑскер-и?

— 30 пуса пур. Хаклӑ.

— Хаклӑ тевĕрен, кӑҫал аш хӑпарса кайрĕ. Сом та пилĕк пус та вон тӑватӑ пус. Хӑнҫа полнӑ он пек хак?..

Калаҫрĕҫ калаҫрĕҫ, пĕр-пĕрне ни йепле ӑнлавaймарĕҫ. Тӑлмаҫӑ кирлĕ вĕсене.

«Хӑнҫа» ҫӑвашсемпе «тете» ҫӑваш сем, вотӑпа вутта, ӑҫтапа кӑҫтана пĕрлештерекен тӑлмаҫӑ вӑл—«Канашпа» «Капкӑн» пулаӗ. Илтни есĕр ҫавӑн ҫинҫен? М.

Сутйа. Потсутимӑй Ҫитӑрӑв, ес ытла хуллен калав, хытӑрах кала!

Айӑпланакан. Ес ытлашши ан мӑшкӑлаха, ху ман вырӑнта пулсан ҫӑвар на та уҫаймӑн?.. ҪИЛТУ.

ПУРТЕ ЎСĔР

(Мункунта).

Томски кĕпĕрнинђе, Иванăвă йалĕнђе пĕр çынăн ĕни сăмакун пăтти çинĕ те, ўсĕрлсе кайса вилнĕ. (Хаçатсенђен).



— Пуртэ ўсĕр Еп те ўсĕр. Арăм та ўсĕр, ĕнине те ўсĕртрĕм. Ташлăр ял кĕр! Ей, ĕне—Пачиçи! Сиксем лайăхрах!

Çĕнĕ „споссăпсем".

Çак саманара, хађхи вăхăтра, çак кунсенђе йалти хусах арăмсемпе хĕрсем ађа пăрахмалли çĕнĕ способсăпсем (мелсем) шухăшласа кăларма пуçларĕç. Анђах ку способсăпсенђен тĕлĕнмелле те, тата хăрамалла. Акă малалла çĕнĕ спассăп йĕркисем. Ђăваш Сурăм вулă сĕнђи Тивĕш Мăтăнка салиђи Караç Михађ арĕм йăвăр çын пулаť те çăмăланмалли мел тупса муђђа çине хăпарса çўллĕ çĕртен айалалла тăрс сикет те «Капкăн» çине пуса ђараť. Халĕ ытла çўлĕ çĕртен сикнипе те «Капкăн» çине пулнипе те тăраймасăр выртаť. Ку споссăп çуратиђенхи вађђи. Тата çуратсан вађђи те пур. Ку тата ак çапла. Ђăваш Сурăмĕнђи вĕрентекен сĕр йăвăр çын пулаť. Ку та ĕнтĕ споссăп тупса хĕрарăмсем вĕрентнĕ тăрăх, йĕтĕн вăрри вĕретсе çисе пăхаť, анђах ку споссăпăн усси пулайман пирки ађине çуратмаллах пулнă. Çуратсан макăрнине çынсем илтесрен, ађине ђăркаса сăмавар лартмалли кăмака шăтăкне кирпĕђ хушшине ђикет. Шкулта вут хутмасăр пурăнмалла мар, ађа шăши те туххи шăши мар, кăмака шăтăкне те пĕђен шыраса тупас çук, виççĕн-тăваттăн шыраççĕ те хĕр ађа туртса кăлараççĕ. Çапла халĕ ĕнтĕ вăл споссăпсем йурăхсăра тухаççĕ.

ШĂШИ.

ÇУРКУННЕ ÇИТЕТ!

Шупашкарта намăс кĕнекесене, çарамас хĕрарăм сăнĕсене салатакансем пур.
Вĕсене ђарас тĕлĕшĕпе Шалти Ĕç Комиссариаđĕ постановлени кăларнă. (СН-К саççетанинђен).

Çуркунне кушаксем те хÿрисене тăратса хайарăн:

— Мйаукла̄таççĕ.

Парометăр çуккисем çавăн тăрăх çавталăка пĕлеççĕ:

— Çуркунне çитет!—теççĕ.

Кушаксем туй тума тытăнсан çынсен йепле иртермелле.

Турă кĕнекисенђе те калăвă, вĕт:

— Пĕр çăкăрпа çех сывă пулас çук, тенĕ.

Çамрăк çынăн çамрăк шухăш. Таракансем те авланмасăр пурăнаймаççĕ. Анђах тĕрлĕ ђĕрĕ ђун тĕрлĕ «йуратаť». Сыснасем пĕр пĕрве

— Ес хитреске. Ех, йуратапске сана тесе сысна хĕрин кăмăлне çавăрса тăмаççĕ.

Çынсен урăхла йурату. Малтан палламаť, унтан

— Йуратап—тет. Малалла:

— Ђун таваť.

Епир çамрăкрах ђухне çапла тăваттăмăр.

Анђах самана улăшăнвă май йурату йĕрки те улăшăннă темелле. Çук тĕрĕс мар, пур тĕлте те киввипех йуратаççĕ: Йалтăра та, Мускавра та, Хусанта та. Шупашкарта çех çĕнĕлле йуратма тапратвă.

Те хĕрарăм çитейменнипе, те хĕрĕсем йуратмавнипе, те алиментран Шупашкар кађђисем çарамас хĕрарăм сăвĕсене пăхма йуратаççĕ, тет. Кĕнекисем те çавăн пеккисем салатаççĕ,—терĕ Моросăв йул. Совнаркомра.

— Ех, ђунăм, пепĕксем! Йураťçке сана. Сана канхвит те илсе памалла мар, сан патва çÿресе пушмак та çĕтмелле мар. Алимент та ыйтмастăн ес,—текелесе выртаť пулмалла Шупашкар кађђи вырăн çинђе.

Ех, пурнăç, пурнăç. Телейсĕр вăхăтра çуралнă есир, Шупашкар ађи-пăђисем. Ку савăнăça та сиртен Моросăв туртса илесшĕн.

— Шеђђетĕн епĕ сире.

ЛОШНИКĂВ.

Йалти мушик.

— Пирĕн пĕрçататлĕ пĕр хут тататкĕ çырса панăшăнах пулеутулкă сутгине ыйтаť. А çав кантурти «ĕçтăваťкам» текеннисем пысăк ĕç тăваť теççĕ те,—миçе ђетвĕрт ыйтаç пуђ вĕсем?

Хыткан Хветке авланни.

Хыткан Хветке Ђалăш Хырăм йатлă йалăн уй хĕрĕнђи, кукăр кăрђăк пек, ђалăшса кайвă пÿртре пурăннă. Çĕрĕ увăн пит сахала пулнă, выђах ђĕрлĕхсем, кушакпа сысна çÿрисĕр пуçне, нимĕн те пулман. Йалтан йала, килĕрен киле тара кĕрсе ĕçлесе хырăм тăрантаркаласа пурăннă. Хĕлле хырăмшăн ĕçлет, çулла мĕн панипе килĕшет, çĕрне тара паркалаť. Кĕрлвĕ ђухне Хыткан Хветкене ăна та паратпăр, кăна та паратпăр, теççĕ, рашшут (расчет) тунă ђухне... хулпуççисене кĕпепе, урисене тăлапа витĕнтермелле пулсан та тав та пуç вара. Хăш ђухне пĕр спаçипăшăнах темиçе уйăх ĕçлеме тивет. Анђах Хветке нумайа хапсăвакан çын мар, мĕн панипе килĕшет.

Çулсем иртеççĕ. Иун, çынва хĕрÿлентерекен йун вĕреме пуçласан Хветке пуçве тепĕр майлă çавăрма тытăнаť. Пĕтĕм ђунтан вартан, пырши пакартипех вăл Сарпикене йуратса пăрахаť. Сарпикене хăвăрах пĕлеттĕр ĕнтĕ. Мĕнле хĕр, ах!.. Малтан пăхсан та, хыçалтан пăхсан та, пыл та çу. Урам тăрăх вара пĕсехисене каçăртса, ик аллине каđђа-маđђа, умлă-хыçлă вăшвăш сулкаласа илемлĕн, акăш пек, йарăнса пыраť. Иçĕм çырли!.. Хĕрĕ тăлăх пулсан та, тупраллă тата: пÿрт çургла, тимĕр кăвак айарлă.

Ех, тĕрленĕ кĕпеђђе Хветкене, швегски пиртен тунă йĕмђђĕ, хулпуççи урлă ђĕн пиçихипе çакса йанă хуг купăсђĕ! Ун ђухне вара... Сарпикене унтан хыпкăђпа та уйарас çук.

ХАЛАПСЕМ.

Çĕрĕк те пулин çĕр тенкĕлĕх, тесе каларĕ, тет Ӳăваш Сурăм вулăсĕнӳи Тивĕш кооператтив претçетаттĕлĕ çĕрсе кайнă сирки, çулталӑк ытла сугăнайман пулă каткисене ревиçи комиççин ӳленĕсене кăтартса.

———

Тӳрĕ калакан хăвавне йураман тенĕ «Капкăн» хуçи «Капкăнра» ӳкернĕ ςынсем куçĕсенӳен вут хĕлхем кăларсах йатлаçнине курсан.

———

Кашкăр пулăшсан, вăрăмтуна та лашана ӳкерĕ, тенĕ корреспотент, „Капкăн" пулăшнипе, йал куштанне тĕрме алăк патне илсе пырсан.

———

Аӳаш пăру ик ĕнене ĕмет, аӳаш марри хăй амăшне те ĕмеймест, тенĕ пĕр ваккӑт айăпланакан̆ĕнӳен те, айăп лаканĕнӳен те укçа сăтăрса йулсан.

———

Арлă арăмăн пĕр çăвара сурас пулат, тенĕ пĕр упăшка арăмĕн тӳпинӳен сурса.

———

Хĕрĕх шăл витĕр тухсассăн, хĕрĕх йала сарăлĕ ,,Капкăва" хĕсĕнсен, хĕрĕх кĕпĕрне кулĕ, тенĕ Мăнтăр Ваçли кооператтив кассине киле илсе пырсан,

———

Йалсенӳи метр виçисем



Сыснаран йăтă çуралмас̆т, сан аӳу ку, тенĕ пĕр хĕр сутра, аӳа амшĕ çи нелле пăхса.

———

Мункун килет, мункун килет, пирĕн хырăмран пăс тухассине, курран вут тухассине пĕлтерет, тенĕ Хветке Кĕркури пырне йарăнтарса.

———

Хăмла йăвăç тăррине улăхтарса лартат̆, тенĕ усĕрпе тем те туса пĕтернĕ çын потвала лекксен.

И.

Мункун та çитрĕ. Хĕрсем урама тухса ларма пуçларĕç. Хыткан Хветке те хитререх саплăклă кĕпе-йĕмсем тăхăнса Сарпикесен йалне çӳреме пуçларĕ (йалĕ инçе мар, çур çухрăм ытларах анӳах).

Пĕрре, пĕр тӳлек çанталăклă ăшă каç, Хветке пĕгĕм хастарлăхне пухса, Сарпикене йурату сăмахĕсем калама тытăнат̆.

— Еп, сана, тет, пĕлĕт çинӳи пӳлĕх çĕрен те, çĕр çинӳи ӳи хаклă йапала сенӳен те ытларах, мăй таранах йуратса пăрахрăм. Пурнăç сан аллунта, тет хĕпхĕрлĕ хĕрелсе.

— Мĕнле пурăнăпăр вара иксĕмĕр? тет йăвашшăн çын ултавне пĕлмен Сарпике —Савăн пурлăх тавраш саплăклă кĕпӳ йĕмӳсĕр ку,не урăх нимĕн те çукçке.

— Пулĕ, пурте пулĕ, тет Хветке ури çине тăрса. Саплăка тиркеме халĕ ĕлĕкхи мар. Упа пек ĕçлĕп, кашкăр пек выçă çӳрĕп, сана тăрантарăп тăрантарăпах. Мăй таранӳенех çитерĕп. Ӳейне сахăрпа ĕçтерĕп, ӳей ӳашкисем туйанăп, кăшни кун ӳуп тăвăп.

— Ӳуп тавасси тăвăн та, анӳах... мана ӳуп тăвиӳӳен ыттисене кайса ӳуп тусан аванрах пулĕ, терĕ те Сарпике, вăр-вар тарса кĕӳĕ хăй килне.

Откас! Откас паӳи ку! Мĕнле капла? Сарпике мар ку, сар пĕкĕ. Пĕкĕ пекех кукăр. Малтан, паллашсанах, темиçе хут та ăшшăн пăхса илӳĕ, сарçу пекех ирĕлтерсе йаӳĕ, халĕ... Шăпи ман çавăн пек пуӳ. Çеклĕ туса çакăнса вилесси çеç йулӳĕ ĕнтĕ. Кăкăр ĕмекен аӳа йепле амĕш сĕӳĕсĕр пурăваймас̆т, çавăн пекех елĕ те Сарпике-

Выҫӑх-ҫӗрлӗх тухтӑрӗ етемсене панӑ канаш.

(Мункун ваҫҫи 9 саппопӗт).

1. Лаша хӑй апатне ҫисе йарайман пулсан, вӑл сан ҫине, лайӑх апат паманшӑн ҫилленнипе, „Капкӑна“ шалӑпӑ парасшӑн.

2. Мункун хушшинҫе ҫапӑсса ҫӳрекипе ӗшенсе вӗриленнӗ ывӑлна 3 сехет иртиҫҫен сӑмакункӑпа ан шӑвар.

3. Хӗрӗнкеленнӗ арӑмна пӑтӑ ҫинӗ хыҫҫӑнах ӑшалама ан тытӑн. Малтан ҫывӑрса тӑр.

4. Арӑму хыҫҫӑн, лашу хыҫҫӑн ҫӳренӗ пекех, ҫӳре. Йурат ӑна, ан ҫап, ан ҫилен, ан вӑрҫ, йаланах ырӑ кӑмӑлпа тирпейлӗ пӑхса, аҫашласа хӑна итлекен ту. Вара вӑл сана тутлӑ йӗкерҫӗсем туса парӗ.

5. Вӑрҫнипе ҫӗрнисене хӑйпӑтса пӗтернӗ каҫҫӑ (йӗкӗт)—наҫар упӑшка пулаҭ.

6. Ҫул ҫинҫе ӳсӗрпе атту тухса ӳксен, уруна ҫул хӗррине, пыҫҫӑклӑрах, ҫемҫерех вырӑна илсе пыр, хытӑ ҫул ҫинҫе урунти ҫӗрнӳсене пӑсӑн.

7. Ӳсӗр ҫын хӑй хырӑмне урисемпе тапа пуҫласан, тӑтӑш пыҫҫӑкра йавалана пуҫласан, колики йатлӑ ҫир пулаҭ вара, ун ҫинҫен хӑвӑртрах милитсийе пӗлтер. Милитси килиҫҫен ун хырӑмне уьӑмпа сӗрсе тӑр, ан вырттар.

8. Етем ӳсӗрет пулсан, унӑн ҫаварӗнҫен апат пекки йухаҭ пулсан, вӑл ҫирлӗ пулаҭ. Пырса пӑх, йанах айӗнҫе мӑкӑҫ-шакӑҫ ҫук-и? Мӑкӑҫ-шакӑҫ пулсан, ан ҫыпҫӑн ун ҫумне—хӑрушӑ.

9. Арӑмсен упӑшкисене кашни киле таврӑнмассӗренех лайӑх пӑхмалла: упӑшкун касӑлнӑ, йе ҫӗрӗлнӗ вырӑн ҫук-и, мӗнӗ те пулсан шыҫман-и?

ЙАВАН МУҪИ.

Кам еӑнӗ ҫак?

Ӗҫлӗ ҫынсем хушшинҫе ҫавӑн пек ҫынсем пулсан, „Капкӑн“ ретаксине ҫырса парӑр. Вара вӗсене шурӑ ҫуллӑ райа кӗртмелли ҫынсен ҫписки ҫине кӗртсе хурӑпӑр.

сӗр пурӑнаймастӑп. Ох-ох-ой, тет Хветке, пуҫне хыҫса.

Мӗн тӑвӑн ӗнтӗ? Кайас пулаҭ каллех хуҫа сыснисене кӗтме.

Киле ҫитнӗ ҫитменех Хветке патне пилӗк ҫухрӑмра ларакан Вӑрӑмпуҫ йалӗнҫи Самсун Унтри пырса кӗҫӗ. Пӳрте кӗнӗ-кӗменех, Самсун Унтри, ухмаха йернӗ ҫын пек, Хветке умне ҫӗре ӳксе

— Мӗнле есӗ, тет, ҫапла ҫапла тупраллӑ, пӳрт ҫуртлӑ, тимӗр кӑвак айӑрлӑ хӗр тупнӑ темести? Пошалстӑ, Хветке тусӑм, ан авлан. Мана авлантар. Хӑвах пелетӗн, йепле есӗ нушаллӑ пурӑнатӑп. Еҫлекен ҫук. Авлантарсан сана ҫервонтсӑ парӑп, тет.

— Халех пар, вара илсе кайӑп, тет Хветке аптӑранипе.

Майлашрӗҫ. Виҫмене Сарпикене Самсун Унтри ваҫҫи ҫураҫма каймалла турӗҫ. Хветке тупкӑҫи пулаҭ.

— Пурӗ пӗр, тет Хветке хӑй ӑшӗнҫе, хӗрӗ мана пулас ҫук. Укҫипе тумланса йулам хуҭ!..

Унтрирен пӗр ҫервонтсӑ илсенех, Хветке хуҫаран пиншакпа кивелме пуҫланӑ йӗм сутӑн илсе йараҭ. Паламалла та мар пулса карӗ!

— Иьӗ талӑк иртсен, ҫӗрле, Самсун Унтрийӗ персе те ҫитет лашапа Хветке патне. Лараҫҫӗ те кайаҫҫӗ Сарпикене ҫураҫма.

Хветкен ӑш вӑркаҭ. Вӑркамасӑр! Темле хыт ҫӗреллӗ ҫынӑн та куҫҫуҭ тухса каймалла ун пек пулсан.

Персе ҫитрӗҫ. Сарпике лайӑх йыщӑнса илҫӗ. Пӳрте кӗрсе вырӑнаҫса ларсанах, Самсун Унтри авланасси ҫинҫен калаҫма тытӑнаҭ. Калаҫсан, калаҫсан, сӑмах ҫаврӑнӑшӗпе, кунта килнӗ ҫух, Хветке йалне ҫитнӗ ҫӗрте

Ула сысна.

Ула сысна пĕркунне
Хапха айне хĕсĕннĕ.
Мĕн тăвăн?
Кăшкăрать те кăшкăрать!
Сысна сасси, уçăскер,
Пĕтĕм йала йанăрать.
Хĕрлĕ йăтă те илтсе,
Те тем урăх шухăшпа
Инкек çине çитрĕ те,
Акă вăрăм хўрине
Çавра-çавра ывăтать,
Малти икĕ урине
Йалтти-йалтти хăпартать,
— Мăнаккам, тет—мăнаккам,
Ђимха, сана пулăшам!
Ула сысни анђăка
Паллаймарĕ пулмалла—
— Тĕрт, тет, акă шалалла!
Хĕрлĕ йăтă çавăрса
Хыпрĕ сысна хăлхине,
Тавай мĕн пур вăйĕпе
Туртма урам йенелле,
Ђун хавађпе хай сысна
Пушшех хытă кăшкăрать
Мĕн пур вăйне пуçтарса
Карташнелле туртăнать;
Те хытах та туртăнђĕ—
Хапха йарах уçăлђĕ.
Ула сысна тăђĕ те
Хăлхисене хыпалать.
Ак ĕнтĕ?
Сылтăм хăлхи мĕскĕнĕн
Тĕпĕнђенех татăлнă.
— Ей, анђăк!
Ыырна ларашшĕ!
Терĕ те.
Йунлă пуçне çиллипе
Лăстăр-лăстăр силлерĕ.

Н. ЕВТОКИМĂВ.

„Капкăн" илĕр!

Ей, йулташсем, мушиксем,
Хура тăпра тусĕсем!
Сухалсене шăлкалăр,
Хăлхусене тăратăр!
„Капкăн" тухать çатлатса
Пур тăм пуçа çаклатса,
Ухмахсене пĕçертсе
Ăслă пухма вĕрентсе!
Сире, савнă тăвансем,
Лайăх тўрĕ мушиксем,
Ђунтан ырă вăл сунать,
Пуçа ђиксех тайăлать
Ей, ес тата, Иăванкка,
Ма куç хупса ларан-ха?
Вăхăт халĕ кивви мар—
Куçа хупсах ларас мар.
„Капкăн" çырнса илмелле
„Илес ăна!"—темелле,
Кăсйа тĕпне хыпала
Вак укçусем пур увта...
„Капкăн" çырнса илĕр!
Вулăр, ăна, кулăр!
Лайăх, тўрĕ пурнăр!
Сире еппĕр кĕтетпĕр!

АТТАИ.

усал курнине те каласа кăтартать:

— Хветке йалĕ патне çитерехпе, лаша ђипер ђупса пынă çĕртех тăп тăђĕ. Çĕрĕ сĕм тĕттĕм. Çалтăрсем те çук. Усал тытрĕ тесе, лаша тавра сан вађђи илнĕ куђенеçе татса пăрахса та пăхатăп, лаши çапах тапранмасть. Капла усси çуккине кура, нимĕн тума аптранипе, лашине пулăшса та пăхрăм, тапранмасть. Çўç-пуç тăрса карĕ. Темле майпа урапана кайран çĕклесе пăхма шухăш тытрăм. Çĕклерĕм те, лаши çăмăллăнах малалла утса карĕ. Урапи мише (мишавай) йупине çакланнă пулнă. Сана йуратнипе пуç аташса кайнă тет, Самсун Унтри Сарпике çумнерех шăвăнарах ларса.

— А, тет Сарпике, ес усалтан та хăратни! Пымастăп сана кађђа. Хветке манăн луђђĕ усал-тĕселтен хăрамасть. апла мари, Хветке? Вăл мана килĕшет.—Хветке тусăм, виçĕм кунхине ан та асăн, йури каларăм... Тўррипе калама вăтантăм. Ес аван çын. Ĕçђен. Тумланасса та тумланнă.

Хветке калама çук савăнса карĕ; савăннипе, астăваймасăр, хĕре ђуп тăвас вырăнне, Самсун Унтрин сухалне 3—4 хут та ђуп туса илђĕ пулмалла айван. Çураçрĕç. Самсун Унтри тупкăђи вырăнĕнђе пулђĕ. Малтанах туртăнкаларах тăђĕ те, кайран итлерĕ тата.

Пĕрик кунтан, рекистратси тунă хыççăн, Хветке Сарпике патне киле кĕђĕ. Туй пекки мĕнĕ пулмарĕ. Туй тăвас вырăнне, хуранпа вĕретсе ђей ĕçрĕç. Хура çўçлĕ Хветкепе сарă çўçлĕ Сарпике пайан кун та савăнса пурăнаççĕ.

ИĂВАН—МУЂИ.

Асамçă.

Тĕлĕнмелле, йулташсем! Ăçта çитнĕ унта пăс, електриçĕсĕвĕ енеркийĕ*), çĕлекен, урапа çĕлекен машшинăсем—çавăнтах тата вĕсен çумĕнçех—асамçăсемпе тухатмăшсем.

Тĕлĕнсе йăванса кайăн!

Иалта мушиксен çейăлккă, вейăлккă пур, хăй çĕрне мушик трактăрсемпе сухалаť, çавăнтах ун çумĕнçех кашни йалтах асамçă пурăнаť. Пурăнаť, çăкăр çамлаť, мушиксене хăратаť.

Ăнланмалла мар, тĕлĕнмелле йапаласем Çак кунсенçе, çапла, пĕр йалта асамçа вĕлерне. Ну, вĕлернĕ, вĕлернĕ пултăр, мĕн пур унта?—Манас пулаť. Çук, манаймарĕç ăна мушиксем. Иĕрсе пĕтрĕç, ахăраççĕ, хăйсен çÿçне лăскаççĕ.

„Çÿлтен" айăп килесрен хăраççĕ.

Вилес умĕн çак асамçă вăтам хресçен патне пынă. Паллах ĕнтĕ, вăл килсен мĕн те пулсан пулаť: йе ĕне „ÿкет" йе урăх инкек пулаť.

Асамçă килнĕ те, сĕтел хушшине кĕрсе ларнă. Куçĕсем хăйĕн тĕттĕм, майăхĕсем (уссисем) айалалла усăннă, тата сухалĕ силленет.

Лараť пирĕн асамçă, сулахай аллине хыçкалаť. Паллах ĕнтĕ, пÿртре пурте хăраса ÿкрĕç.

Хуçа арăмĕ сĕрĕм тивнĕ пек çапкаланса çÿрет, ÿсĕркелет, вăрттăн çухне сĕтел çине мĕн тутлă çимине килсе лартаť. Карçăкĕ, çав вăхăтра ăна пуççапса, аçа пек ыйтаť унтан:

— Мĕскер есĕ, ырă çын, пирĕн пата килтĕн те сулахай аллăна хыçатăн. Темле инкек йе хуйхă пулмасťи?

Асамçă ăна пăхмасăр сăмса айĕнçен калаť:

— Мушĕт, асанне, пулĕ те çав. Хуйхă пулсан унтан хăтăлма пулаť. Инкекрен хăрама кирлĕ мар, тет пирĕн асамçă, хăй пĕр май апат „мăраť".

Хуçи тата, уксах Тимуç, карçăкне супĕлгетме çараť те, асамçă патне пыраť:

— Кам хушрĕ сана, тет вăл ăна, ман пата килсе ĕçсĕр усăнса лармa? Мĕн аллусене хыçкаласа ларан, хăн тăласем ĕрçетсе ларан? Хыçкаларăн, çитĕ—вĕçтер, лекмен çухне, кунтан ырă кăмăлпа.

---

*) Вăйĕ, хăвачĕ.

Пÿртре ыттисем кăна илтсен хытса кайрĕç... Асамçă кăвакарса кайрĕ, тăçĕ вăрăмăн сывласа йаçĕ те, тухса утрĕ.

Ну тухнă-тухнă, манас пулаť. Матки йĕрет, карçăкĕ сысна пек çухăраť, Тимуç, кăкăрне малалла кăларса, калаť вĕсене:

— Ку асамçа çамкинçен лектереймерĕм, ÿкĕнетĕп, епĕ ун пеккисене йалан икĕ куçĕ варринçен „хыçатăп", тет.

Каç пулçĕ хаçхи. Матки макăраť, карçăкĕ çухăраť. Тимуç сак çинçе сăмсипе шăхăртса выртаť.

Сасартăк çĕр варринçе матки Тимуçа вăратаť.

Ну, тет вăл çĕтресе, çитрĕ нуша. Итле! Çăнахах: картаран пăру мĕкĕрни илтĕнет. Ну, хунар çутрĕç, тухрĕç карташне—тĕрĕс: пăру карта варрине тăнă та, хÿрине çÿлелле çĕкленĕ, ахăраť тем пулнă пек, ну, ахăраť те ахăраť, мĕн тăвăн ăна?

Çăкăр йĕпетсе паçĕç,—илмест, сĕт паçĕç—пăхмас те. Çĕрĕпе мĕкĕрçĕ. Ирхине те çарăнмасť. Кăвтăрла та мĕкĕрет.

Каçпа хĕрарăмсем Тимуçа пĕтереççĕ, хĕсеççĕ: асамçă патне кайса, ăна ÿксе пуççапса каçару ыйтма хушаççĕ.

Тимуç кайаcтăн марçĕ малтан, кайран ним тума аптăраса кайрĕ шăлне çыртсах.

Пыçĕ.

— Мĕскер?—ыйтаť унтан асамçă, пăруву мĕкĕрмест и?

— Çапла, тет пирĕн Тимуç асамçа хирĕç, пăру мĕкĕрет, нийепле те çарма çук, тет, çăкăр та çимест, сĕт те ĕçмест. Нуша. Каçар мана, тет. Вăй çитнĕ таран тÿлĕп, тет.

— Иурĕ, тесе хуçĕ асамçи.

Тухрĕ. Вăл малтан пыраť, ун хыçăнçен Тимуç „лĕпсĕртетет".

Çитрĕç килĕ умне. Асамçă калаť Тимуçа:

— Алăкран кĕрсенех, тепĕр йенне çаврăн та турра кĕл тума тытăн. Епĕ ÿркенсе тăмăп, пăру патне хамах кайăп.

Кайрĕ хаçхи пăру патне.

Тимуç çавăн хыççăнах унтан вăрттăн пĕр кĕтессе пыраť те асамçă йепле кĕл тунине курас тесе, пĕçĕк шăтăк-

ВАÇÇУК.

Хрулка пиђђе Ваççукĕ
Хĕр суйлама тытăнвă,
Çак ĕçпеле мĕскĕнĕн
Йалтах пуçĕ çаврăнвă.
Мĕн тăвас?
Халĕ хĕрсем нумай ђух
Лайăххинех çаклатас!
Микик хĕрне илĕттĕм—
Сăмси пăртак пысăкрах,
Уншăнах та тăмăттăм—
Хулăм тути усăкрах.
Варук питĕ ăслă хĕр.
Ăна пурте мухтаççĕ,
Анђах урлă урисем
Арăш-пирĕш утаççĕ.

Ђипер хĕре Настука
Ман пек никам савайман—
Çак хĕр ашшĕ ђухĕнне
Тупра пĕртте пухайман.
Анат касри Тăхтапин
Йапали те ђылай тет,
Анђах ашшĕ ват Пархин
Хĕрне выђăх памасть, тет.
Аслурамри Караçук
Куçран пăртак вайсăр та—
Аптăрсах кайас çук;
Унăн тупри виç арђа
Çурăлас пек лараççĕ.
Ăна сурăх, кађака.
Ват лаша та параççĕ.
Тумлă сумлă çак хĕре
Йепле вăра илес мар?
Йухса кĕрев пурлăха
Мĕншĕн хапăл тăвас мар?
Ваççук тивĕç шухăшсăр
Илђĕ йађĕ Краçука.
Килђĕ пурлăх пĕр пуссăр
Çакă пуйан арăмпа
Пĕр пӳрт тулли йапала.
Карташ тулли выђăхсем.
Пурăнаççĕ савăнса
Çакă пирĕн çамрăксем.
Анђах тутă пурăнăç
Йалан телей пани çук,
Арăм пурлăхĕпеле
Етем ырă курни çук.
Ир пулать те, каç килет—
Çаплах кунсем иртеççĕ;
Кăраçукăн куçĕсем
Нађарланса килеççĕ.
Куçри мăкăл-мăкăлĕ
Автăратать мĕскĕне.
Таçта таçта айакка
Йумăçа та кайаççĕ,
Кусар тăрăх шăтăка
Вериĕ шыв та йараççĕ
Нимĕскер те пулăшмасть!
Пуђнитсана кайсассăн
Ваççук лĕлђĕ арăмĕн
Траххом ђирĕ пулнине,
Тухтăр „пулмасть“ тесессĕн
Тăкрĕ вĕри куççуђне.
Çакă йĕкĕт авланни
Йкĕ çул çеç çитетђĕ
Унăн çамрăк арăмĕ
Суккăр пулђĕ, хупланђĕ.
Сĕм пурăнать Кăраçук
Упăшкине хуйхăртса,
Хађ те пулин çав Ваççук
Çӳрет ăна çавăтса. ЕВТОКИМĂВ.

ран пăхать. Асамçă çав вăхăтра картара пăру хӳрине тытать те пулавккăйĕн туртса кăларать. Хай пирĕн Тимуç. хайсен пăрăвĕ пек, çухăрса йађĕ. Карта

алăкне васкаса питĕрсе илђĕ, çынсене ђĕнсе килђĕ те, мĕн курнине каласа пађĕ.

Тытăнђĕç асамçа „хĕртме“.

Хĕртрĕç, хĕртрĕç, алăсемпе те, патаксемпе те хĕнеççĕ—асамçă ђĕнмест, вилнĕ ђух вара каларĕ пĕр икĕ сăмах:

— Пăру хӳрине пулавккă епĕ мар, турă ђикнĕ, тет. Çав сăмахсем хыççăн турра ђунне пађĕ.

Ну, вилнĕ вилнĕ. Манас пулать. Анђах пайан, калăпăр, вăл вилнĕ, тепĕр кун инкек: кӳршĕ йалта пĕрин ĕни ђăхха таптаса вĕлернĕ.

Пĕр уйăх иртри унта, йе икĕ уйăх, татах тепĕр инкек: ӳсĕр çын каçпа киле таврăннă ђух çырмана кайнă та урине сиктернĕ. Икĕ инкек пулђĕ, мушиксем виççĕмĕшне кĕтеççĕ. Виççĕмĕш пулсан тăваттăмĕшне кĕтеç...

Пĕтерет ĕнтĕ асамçă çынсене.

М. СОШЂЕНКО.

Çак мĕнле карттинă?

Капкăнла кĕп р.

Пĕр Аҫам йатлă аҫа Шурҫа вулăсĕнҫен çыраҭ:

Шурҫапа Хуракасси хушшинҫи кĕпере, арман тытса пурăннăшăн, Хорошилăв Çтенккине йусаса пурăнма хушнă. Ку кĕперĕн карлăкĕсем хаҍ çырма тĕпĕнҫех выртаççĕ, кĕпер каштисем хуçăк. Çак кĕпере капкăн теме май пур, мĕншĕн тесен кĕпер çинҫе шăтăк темиçе те пур, лаша урисем те кĕрсе лараççĕ, тет.

Çук, аҫам, йăнăшатăн! „Капкăн,“ хăйне шăтăк кĕперпе танлаштарнăшăн, сан çине çилленесшĕн.

Мĕн çинҫен?

Томск кĕпĕрнинҫен пĕр йулташ çыраҭ:

Епĕ, уҫитле кĕрес тесе, Томскинҫи çут пайне сайавлени патăм. Епĕ 22 çулта. Хаĭĕ епĕ „Капкăн‘ илсе тăратăп. 1911-мĕш çулта çемски шкула похваҍни листăпа пĕтертĕм. Томскинҫен ответ çук, тет.

Тархасшăв, йулташсем. пĕр йапала çинҫен çырнă ҫухне темиçе йапала çине кĕрсе ан кайăрха. Пуçăма аташтарса йама пултараттăр.

Ҫаплă праçник.

Çын вилсен хĕпĕртекен йалсем те пур иккен.

Ҫупай вулăсĕнҫен çыраççĕ:

Кив-Çурт-Маркара пĕр ватăлса çитнĕ карҫăк вилсен, йалти çынсем ун пурлăхне сутса 9 ҫетвĕрт те 3 путăлккă ерех ĕçсе, çур пăт пĕремĕк, 23 кĕренкке кулаҫă, пĕр пăт шушкă çисе асăнҫĕç. (Платка И. Ш.)

Ҫаплă иргнĕçке сирĕн мункун. Пуçаракансене вăрçса илмелле мар-ши?

Кĕрешекен.

— Епĕ «хуликансемпе кĕрешекен опҫĕствăн» ҫленĕ. Хуликансемпе кĕрешетĕп.

— Мĕнле майпа ес вĕсемпе кĕрешетĕн?

— Çамкисенҫен паратăп.

КУРКА.

Пысăк çĕклем.

— Петĕр Іванҫă, кăçта кайнă есĕ?

— Пиçмоностсă патне.

— А, ку, мĕн ку сан, пĕр хула й?

— «Кавапі» хаçат, икĕ ернери пĕтĕмпех пуçтарăнса выртнă, пĕри те çухалман. Хам кайса илмесен хаçат никçан та киле пырса выртмасҭ.

Мелҫ тупнӑ.

Хӑш-хӑш йалсенҫе мункун ҫухне пӗрпӗр токлат тунине итлеме халӑх пухма питӗ хӗн.

(Йалкорсен ҫырӑвӗсенҫен).

I. Мӗн пулнӑ?

Хӗвел хӑй майӗпе каҫ йенелле сулӑнса пынӑ. Йешӗлленме пуҫланнӑ ҫӗре йерипен тӗттӗм хупласа илме пуҫланӑ.

Йалта пурӑнакансенҫен арҫын йевӗрлисем хӑшӗ-хӑшӗ урамра ҫапкаланса, пӗрпӗрне ыталаса йурласа ҫӳренӗ, хӑшӗ тата, ӑслӑраххисем, ӗҫес ӗҫе тунӑ хыҫҫӑн кавма выртнӑ. Хӗрарӑмсем, упӑшкаллисем, ҫывӑрма выртас умӗн, пулккӑн-пулккӑн пухӑнса, кун тӑрӑшӗнҫе курни-илтнисене сӳтсе йавма тухса ларнӑ. Хӗрсемпе йӗкӗтсем вӑйӑ кӗввисем каласа ҫамрӑк ҫунӗсене хаваслантарнӑ. Урамра ларакан карҫӑксенҫен пӗри:

— Ман упӑтем каллех пайан тӑват урипе упаленсе килҫӗ. Пӑхрӑм та ун ҫине, ах, тур-тур! Пӑхма та хӑрушӑ! Шуралса кайнӑ, шлепки ҫук, ури саланса кайнӑ. Мӗнле епӗ тел-ей-сӗ-ӗр, тесе йӗрсе йаҫӗ.

Манӑнне йаталмаллах мар. Ҫип—ҫиперех ҫитрӗ. Ӗҫме те пӗрлех кайнӑҫ ҫӗ те.

— Паҫӑрах каларӑм: ҫынсен упӑшкисем упӑшка пек, ман пур...

Ҫакна калаканни те, унпа калаҫаканнипе итлесе лараксем те, хӑлхисене тӑратрӗҫ. Хӑшӗн аллинҫи хӗвелҫамӗшсем уҫӑран ҫӗр ҫине тӑкӑнса ӳкрӗҫ, хӑшӗн... Хӗрарӑмсен хӑлхине кӗрсе кайнӑ йапала пурне те хуп хура тара ӳкернӗ. Анҫах ун ҫинҫен малалла калӑпӑр.

2. Ҫӑлӑр, вӗлереҫҫӗ!

Урамри ҫынсем те, пӳртре ҫывӑраймасӑр выртакан арҫынсем те вилес пек ахӑракан сасӑ илтӗнекен кил йенелле ҫупрӗҫ.

— Ҫӑлӑр! Вӗлереҫҫӗ!

Темиҫе минутран кил карти туллийех ҫын. Пынӑ ҫынсен куҫӗсене ҫапла карттин курӑнса кайнӑ: йалсовет претҫетаттелӗ Утаман, ырханскер, тӑрӑхла питлӗскер, йалсовет ҫекреттарне, мӑнӑскерне, хӑй айне персе ҫикнӗ те, ун ҫурӑмӗ ҫинҫе шӑмаллӑ, хӗп-хӗрлӗ ҫышкисемпе авӑн ҫапнӑ.

— Ах, тур-тур! Йун! Вӗлерет!—теҫҫӗ нимӗн тума пӗлмен хӗрарӑмсем.

Арҫын сӑнлисем ку карттина ҫине урӑхларах куҫпа пӑхнӑ. Ун ҫинҫен тепӗр клавара калӑпӑр.

3. Кӗтмен ҫӗртен.

— Упрам, ес сулахай йенҫен пыр, тесе йаҫӗ пӗр ҫынни,—хӑлха ҫиккин ҫен тивретме тӑрӑш. Тӳрех тӑнсӑр пултӑр. Епӗ ҫекреттарне туртса кӑларӑп.

Упрам, такҫанах, вӑрлӑх тырри пама ншӑн, претҫетаттӗле йуваса пурӑннаканскер, арӑслан пек ҫынна вӗлерекен патне сиксе пырса, ҫӑмӑртанӑ ҫӑмлӑ ҫышкине, вирлӗрех лектӗр тесе, ҫӳлелле ҫӗклерӗ. Анҫах пур пухӑннӑ халӑха хытса каймаллах тӗлӗнтерсе йаракан йапала сиксе тухрӗ ҫав вӑхӑтра сасартӑк.

Вилнӗ тенӗ ҫын хӑйӗн ҫинҫен претҫетаттӗле ҫӑмаллӑн тӗртсе йарса ун ҫине хӑйӗн йавӑр ӳҫӗпе хӑпарса выртрӗ.

— Йулташсем! Тӑхтӑрха!—терӗ вӑл. Иӗрккеллӗ тӑма хушатӑп. Епӗр шӳт турӑмӑр. Сӑмах калама претҫетаттӗле паратӑп.

— Ӑҫтан, хӑйаматла, шӳт пултӑр кунта?—тесе кӑшкӑрса йанӑ пур халӑх. Йун... Алли ҫинҫи йунӗ ӑҫтан тухма пултарнӑ?

— Йун мар вӑл, хӗрлӗ ҫерни, тенӗ вӑтанмасӑрах ҫекреттар. Унтан..

4. Ху тӑвас тенине темӗнле майпа та тума пултаратӑн.

Претҫетаттӗл ҫӗр ҫинҫен тӑрса тумтир ҫумне йернӗ пылҫӑксенҫен тасалма силленсе илсе, аллисене кӗпе аркипе шӑлса тухса, ӳсӗрсе илҫӗ те, каларӗ.

— Ҫак йал краштӑнӗсен, йероплан валҫи укҫа пухас тӗлӗшпе пухӑннӑ пухӑвне уҫнӑ тесе шутлатӑп. Кунта килкартинҫе пуху тума хӑйӑхах мар

Ĕçţен арам.

Пĕрре манăн ĕçпе йалсем тăрăх каймалла пулţĕ. Пĕр йала пырса çитсен йалсовет претçетаттĕлĕнţен епĕ хваттер ыйтрăм. Вăл пăртак шухăшласа тăрсан:

— Аĭа, çав шăллăм патне леçсе хăварам, вĕсем пăртак пуçтаруллăрах пурнаççĕ, кил-çурта тасарах тытаççĕ, терĕ.

Епĕ хĕсĕрпесе претçетаттĕл хыçăнţен утатăп. Ţасах вăл мана урама виç ţÿреţеллĕ, ţÿреţисене сăрлана, хăма витнĕ çурт патне йертсе пыţĕ. Епĕр кĕретпĕр килкартине. Йĕри таврара хуралтисем вайлă. Пÿрте персе кеpетпĕр. Пÿрте кĕрсен претçетаттĕл:

— Çакна пĕр ик кунлăх хваттер памăр ши, терĕ.

Епĕр кĕрсен пÿртри арăм темĕскер хăранă пек, шартах сикрĕ; хăпăл-хапăл тăţĕ те хăй тĕллĕн ах çапла калаçа пуçларĕ:

Ку аţапăţана вимле те ţарса çитермелле мар, урайне çÿпĕлесех тăраççĕ. Пайан ир тăрсан ĕне сурăм, кĕтÿ хурăм, çăкăр çăртăм, шыв патне кайрăм, кăмака хутса çăкăр пĕçертĕм. Кăмакана çăкăр хывсан, ţăх-ţĕппе ситерес терĕм, урайне шăлаймарăм. Кун пек урай шăлмасăр пурăнакан марţĕ.

Апат çисен вырăн пуçтарас тенĕţţĕ: Иакур арĕм килţĕ те унпа калаçкаласан, кĕлет умне ларса хĕвел питĕнţе ăва пуç пăхтартăм. — Ех, ку аţапăţан! йепле çивĕ çаплах тиркĕ çапалине сĕтел çинţе хăварнă. мĕн ţухлĕ ĕнтĕ шăна пуçтарăннă. Ашшĕне те тем калăттăм: аţасем тăрсан вырăн та пуçтармасĭ, вырăн та салансах выртаĭ.

Ех, ку аţа пăţана, хăçан ăс кĕрĕ! Такăнсан такăнаççĕ, урлă выртана пуçтарма шухăшламаççĕ. Хурана та пăлтăра кăлармае, урай варринţех ларaĭ.

Кăвас ţĕресси те, çăнăх такани те пÿртрех. Çăкăр пиçсе тухсан кĕлете кăларас тенĕţţĕ, Иакур арăмĕпе калаçсан мансах кайнă. Иакур арăм кайсан тепре шыв патне карăм. Çăлĕ те инçе ĕçке пирĕн! Унтан таврăнсанах сыснасем çуйăхаççĕ, вĕсене тăрантарас терĕм. Кăнтăрла иртсе те карĕ Сыснасене апат парсан, аţасем çийес терĕç. вĕсене тăрантартăм. Ун хыççăн, Петĕр пиţасене ала леççе парас терĕм, унта нумай та лармарăм. Унтан таврăнсан муньана карăм, унта тура йулсаţĕ те, унтан кĕтÿрен таврăнсан ĕнене пама пăртак çум туртма кайрăм.

Тем ĕçлесе кун иртет, капла пуçтармасăр пурăнакан марţĕ, йут çын килсен тем калĕ, терĕ те тытăнţĕ пуçтарма.

— Урайне, урай çĕрет, тесе ţасţасах çумастпăр. Те кунĕ килĕшмест, урай çусан хăнкăла ĕрţет. Иункун çусан хăнкăла пĕтет теççĕ, çавăнпа иртнĕ йункун çăвас тенĕţţĕ, алă çитмерĕ; халĕ килес йункун çăвас тесе тăратăп. Çуртра пĕр хĕрарăм, нийепле те туса çитермелле мар: хурине шуррине тасат, шăтăк-шăкăрне те питĕр, çăкăр пĕçер. выţăхне ţĕрлĕхне пăх, ţăххине-ţĕппине тăрантар. Никăçан çынсем пек пушанса ларни çук, тет.

Хăй васкаса пÿртре пуçтараĭ, йулашкинţен шăпăр илсе урай шăлма пуçларĕ. Пÿртре куç уçайми тусан хускалţĕ, епĕ ţăтаймасăр кил хушшине тухрăм. Çапла пулţĕ ĕнтĕ ман хваттер.

Арăмсем, есир çак арăм пек хавшак ţĕрелле пулса çынсем пырсан пуçтарма ан тытăвăр. Ĕçţен, хавшак çын ţас ватăлаĭ, теççĕ.

Х.

тесе, урама, йешĕл курăк çине тухма хушатăп.

Пилĕк хутţен ţĕннипе пухăнайман пуху, ултăмĕш хутĕнţе, претçетаттĕлпе çекреттар ţейе пулнă пирки, пухăнţĕ пухăнţех. Йалсовет претçетаттĕлĕпе çекреттăрĕн савăнăçне ни йепле сăмахсемпе те хут çине ÿкерейменĕ.

МАМИ.

Вулакансем, епĕр ку историйе хамăр пуçран шухăшласа кăларнă тесе иккеленĕç. Хамăр пуçранах шутласа кăларнă та, мункунта халăх пухас тĕлĕшпе çакă реţеот усăлă пулассăн туйăнаĭ. Сирĕн шутпа мĕнле пек?

М.

Палла токкументсем.

Елĕк пĕр хутсем хушшинче ларса ĕмĕр иртерне çын хăйĕн ачисене: хут çинче çырнисене тĕплĕрех сăнаса пăхсан, çак хутсенчен çакăнмалли туса вилес килекен пулать тесе хăварнă. Çав сăмахсенче вăçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ те пулин тĕрĕсси пуря-çуккине пĕлес тесе, пĕр йĕршнĕрех вăхăтра тĕрлĕрен учрештенисенчи хутсене пăхса тухас терĕмĕр.

Хучĕсене чăваш хушшинче пурнакан çынсем çырнă пулин те, вырăсла чĕлхепе çырнă. Вырăс ачисем 4—5 çула çитсенех вырăсла калаçма пĕлеç çĕ, пирĕн чăваш апла мар, тата çитĕнсе çитсен те вырăсла лайăххăн калаçма пултараймасть. Çавăнпа та йалсенчи кĕнчелерсенче çакăн пек токкументсем те тупма пулать:

Сĕнтĕр вулăсĕнчи вулорканисаттăр чăвашла çырма вăтаннипе, вырăсла çырма пĕлейменнипе, хăйĕн кĕнчелерĕнчен çакăн пек хутсем чăс чăсах йаларкаласа йарать:

«Шебашкар-касинской с.-я г. РЛКСМ.

При сем представляю Анкеты и копия протоколы. Виту того, Вновь поступающих членов написать в Разных отмечать в протоколе, без этого не утвердять.

Приложение упомянуть с комсольским приведия.

Ответ. С. В.Л.К.С.М. (ала пуснă).

Ак, тата тепĕр хут:

Удосвтоверенор.

Даво сие гражданину деревни Карак Сирмов Шоркисринской волости Цивильского уезд АЧССР Николаю Яковлеву А том что по его личной просьбе о его личности

Председатель (ала пуснă)

Тепĕр йалсовет тата пўрне пысăкĕш саспаллисемпе çапла çырать:

Краштан Васли Сквоцова не имеет единоутропного точь и сына О прошедшем утостоверяется сельсовет печеть и предложение руки собченоручно подпись.

Претседатль (ала пуснă).

Халăх сучĕсенче татах тĕлĕнмелле çырусем тупма пулать. Иетĕрне уйесĕнчи 1 мĕш учаскăри Халăх сутне çапла çыру кĕрсе выртнă:

В Народный суд 1-го участка.

От гр на с. Шемердяново Романа Ильича

Заявление.

Подавая настоящее заявляю, что ко мне каждую ночь прибывает „вĕре çĕлен» и превращается в бабу и каждую ночь со мной имеет половую связь, настоящим прошу разобрать это дело и удалить ее от меня.

К сему г н Р. ИЛЬИЧ.

Мĕнле хут ку. тейĕр есĕр. Ку хута, Илле Романĕ, пăртакçă ăслăрах пулнă пулсан, Халăх сутне мар, участкăри тухтăр патне парă пулĕччĕ те, авчах чăваша тĕшмĕшленни пĕтерсе хурать çке! Авалхи чăвашсем вĕри çĕлен тесе йат панă чирпе чирлесен, вĕри çĕлене сута парса хăратмалла тенине илтнĕ те, вăл мĕскĕн, вĕри çĕлен çинчен „превращается в бабу и каждую ночь...“ тесе Халăх сутне шалăпă парать.

Ун пек çырусем пирĕн алăра... алăра мар, шкапра пит нумай. Пурне те кўртсе халăха култарас тесен, чотписчĕксене нумайлатса „Капкăн“ тиражне 5 хут çитерсе парăр, вара „Капкăн“ пысăккăшне те çав çырусем кĕмеллĕх пысăклатăпăр. Амин. МАМИ.

— Пире рай алăкне уçакан пасха.

«Аԓԓо! Аԓԓо!»

Пӗлегӗр ӗвтӗ есӗр ратио мӗн иккенне. Ратио вӑл сывлӑш тӑрӑх сасӑ сарни. Калӑпӑр, Мускавра мӗн те пулсан калаҫҫӗ, йе йурлаҫҫӗ—ратио тӑрӑх ҫав каланине, йурланине илтме пулат̆. Ратио тӑрӑх илтес пулсан ратиоприйомнӗк кирлӗ. Ратио прийомнӗк вӑл аппарат (сӑмакун аппараҭӗ мар).

Вӑт, йулташсем, ман ҫавӑн пек ратио-прийомнӗк пур. Вӑл ратио прийомнӗкпе епӗ кашни каҫ Мускаври хыпарсене, концертсене итлегӗп. Тӗнҭере мӗн пулнине паҭах пӗлсе тӑратӑп.

Прийомнӗк ман лайӑх, хытӑ, пӗтӗм пӳлӗме илтӗнмелле кӑшкӑрат̆. „Аԓԓо! Аԓԓо! говорит Московская радиостанция. Слушайте радио газету“ тесе пуҫлат̆. Вара епӗ итлеме пуҫлатӑп. Кашни каҫ итлетӗп.

Анҭах пӗрре ман прийомнӗк темшӗн пӑсӑлҭӗ. «Аԓԓо! Аԓԓо!», терӗ те ҭарӑнҭӗ. Вырӑсла калаҫаканскер темле ҭӑвашла калаҫма пуҫларӗ. Тӗлӗнсех кайрӑм —Итлӗр, итлӗр... Аксарин йалӗнҭи ратиостантси калаҫат̆, тет Мӗнле ку ратиостантси, тесе шутласа ларатӑп. Унҭен те пулмарӗ кромкоковориттӗл шаплаттарат̆: Кӗҭкей кооперативӗн уйрӑмӗнҭи приккасҭӗк Ҫтеппан Иссайӗв ҫава йӳҫӗтсе сутат̆, хӗвелҫаврӑнӑҫ ҫине вӗтӗ ҭул йарса сутат̆, тесе ҫухӑрат̆.

— Е, ку интереснӑ йапала, тата итлем ха, терӗм.

Кун хыҫҫӑн Мӑн Ҭураш стантсийӗ калаҫма пуҫларӗ: Иван Алексҫейӗв арман хуҫи ҫӑнӑх авӑртакансенҭен 1 кӗренкке илес вырӑнне 5 кӗренкке илни ҫинҭен итлерӗм. Мур пӗтермевӗ, халӑха тулат̆ анҭах, шурӑ ҫуртра хват тер памалла ӑна, тесе ахӑрат̆ пӗтӗм пӳлӗме кромкоковориттӗл.

— Ку Мускавран концерт итлениннҭен те авантарах, терӗм те тата итлетӗп.

Кромкоковориттӗл хайне ҫухӑрат̆: Вӑрман кас Асламасра 12 ҫултан пуҫласа 45 ҫула ҫитиҭҭен пур йалти ҫын сем те «очко» ҫапаҫҫӗ. Нимрен ытла Петти Матвийӗ ҭапа тухрӗ. Вӑл пӗрре арӑмӗҭен вӑртӑн картла выҭама ампарне тырӑ илме кӗнӗ. Арӑмӗ ӑна ампара питӗрсе хунӑ та виҫӗ кун кӗлетре кӑлармасӑр тытнӑ. Тем ҭухлӗ кӑшкӑрсан та кӑларман...

— Ху, ӗмӗтсӗр. пулат̆ ҫке сысна... кромкоковориттӗл темшӗн хр...р...р... пшш .. туса илҭӗ те ҭарӑнҭӗ. Пӑртак

тӑрсан калле пуҫларӗ; халӗ концерт паратпӑр. итлӗр, итлӗр. тет.

Пуҫланҭӗ концерт. Хутар йалӗнҭен йурлаҫҫӗ иккен. Хӑлхана тӑратсах итлетӗп.

Сама садик я садила,
Сама буду поливать,
Сама водку полюбила
Сама буду и глотать, тет.

Темскер, ӳсӗр ҫын йурланӑ пек туйӑнҭӗ. Итлетӗп. Кромкоковориттӗл хайне ҫухӑрат̆. Концерта ӑнлантарса паракан ӗ кам йурланине те каласа паҭӗ. Хутар вулӗсҫӑвкомӗнҭи финпай пуҫлӑхӗ ҭукун артис йурлат̆ иккен.—Вӑл йаланах суттине ӗҫӗт те. ҫавӑнпа лайӑхах йурлаймаст̆. ан ҫиленӗр лайӑх йурламанӑшӑн, тет кромкоковориттӗл ӑшӗнҭи сасӑ...

— Лайӑх, лайӑх...

Кромковориттӗл ҭарӑнҭӗ. Урӑх пӗр сӑмах та ҭӗнмест.

— Мӗн йапала пулҭӗ-ши ку, тесе тӗлӗнсе ларатӑп. Хаҭҭен Мускав стантсине анҭах илтекенҭӗ, хаҭ ҭӑваш йалӗсенҭе те ратиостантсисем пур иккен, тетӗп... Шӑпт тӗлӗнтӗм...

Капла пулсан хамӑр стантсисене итлес мар ши? Мӗн вӑл Мускав?! Вулакансем, есӗр мӗнле шутлатӑр?

РАТИО-КАПКӐНҪӐ.

Мункунта.



— Клупра ĕçрĕмĕр, çирĕмĕр. Пит лайăх „çутта тухрăмăр“. Çутта тухнă хыççăн халĕ тула тухрăм та хăсас килекен пулдĕ. (Хăсаŧ).



— Пит лайăх ташларăмăр вуламалли çуртра. Санпа вуласа ларма та вăхăт пулмарĕ. Киле кайнă духне те пулин вуласа йулас пуŧ.

— УПĂШКИ (ÿсĕр) Çынсем ĕçкĕ çикĕ тăваççĕ. Есĕ пур 30 тенкĕллĕ шалува аду пăдусемшĕнех пĕтерсе пыратăн. Вĕлеретĕп. Виŧ, виŧ!

АРĂМĔ. Турă пул! Ан вĕлер! Вĕлерсен те хĕрарăм пайне кайса каламăп.

Сйес хыççăн.

— Хутсене ĕçлесе пыратăни?

— Ĕçлесе пыратăп çав. Килнĕ хутсене пурне те ĕçлесе ларгатăн та, ĕçĕ те пĕтет вара.

— Сана хăвăн ĕçлесе лартмалли çурта каймалла ан пултăр тата кайран.

Шкулта.

— „Çил вĕрет“ тенине вырăсла мĕнле каламалла?

— Ветер лает.

— „Хуран вĕрет“ тенине мĕнле калăч тата?

— Котел тует.

— „Йată вĕрет“ мĕнле?

— Сопакă кипит.

— Ŧфу! Ес ухмах-и, еп ухмах-и?

— Ты турак и йа турак.

Ŧлен укçи тÿлемелли çĕнĕ йĕрке.

— Ман кашни уйăхрах ŧлен укçисене те пивнойа тÿлемелле пулаŧ.

— Мĕнле апла?

— Виç уйăх ĕнтĕ ман профсойус панă пилет пивнойра саклатра выртаŧ, çавăнпа ŧлен укçисене пивнойа тÿлеме тивет.

КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— Талпиçене. Хусах пуççăн аҫа тăвакансем çинҫен «Капкăнра» çырмаст пăр. Упăшкасăрах туман пуҫ.

— Иарина. Уҫитлĕ, артиссем пек, класра тем те каласа аҫасене култарат, тетĕн. Култартăр. Савăнăçлă çын иккен вăл.

— Путенене. Пĕр оҫко выҫакансем çинҫен çырнисемпех «Капкăна» тултарса лартсан, «Капкăн» йатне улăштарса «Оҫко» темелле пуласран хăратпăр.

— Пултăрана. Есĕ çырнă фелйеттон тăршиве виççе пăхрăмăр та, лапах аршăн çурра ларҫĕ. Аршăн çурăллă фелйеттонсене «Капкăна» кĕртместпĕр.

— Майракава. Кам пĕлмест пирĕн йалти куштана Васли Хĕлĕпне, тетĕн. Пĕлместпĕр çав Хăва та пĕлмест пĕр. Тасти çын ес?

— Пеťука. Мункун ҫухне атте хĕвесрен хăратăп, тетĕн. Ан хăра—хĕвесен «Капкăна» кĕртĕпĕр.

— Вĕтрехе. „Капкăн“ ҫăвашла каласма вĕрентме пултараймасť.

— Куракана. Матви Мĕтрийĕн карҫăкĕ хăй ҫăлавне никама та кĕртменишĕн кӳреннĕ ес? Пирĕн ĕç çук унта Упăшкине, йе йыснӑшне каласа пар.

— И. Каврилăва. Такçанах „Капкăн“ илесшĕн те епĕ, анҫах тĕмĕскер ҫарса тăҫĕ, тетĕн. Пĕре шутласа хунă ĕçе тăвайман çынсемпе епĕ калаçса çăвар тути те сайа йамастăп.

—Йамрана. Пирĕн килрен инсетрех мар таксантанпах йăтă вили выртаť; йалсовет темме çав йăтă вилине пытарттармасť, тетĕн. Ай-уй! Ху тата мĕне пăхан?

Ӳрĕне. Аттене, йысвийа, пысăк аттене, куккийа та çуршар çуллăх „Капкăн“ хам укçапа çырăнса патăм, тетĕн. Мухтав сана, Ӳрĕк тус! Тата хăвăн савни валҫи илмелеҫҫĕ

„Капкăнăн“ 5-мĕш нумĕрĕнҫи сатаҫ туппи.

Вăл сатаҫа „Капкăн“ листине куç тĕлне маларах тытса вуламалла. Малтан сулахай йенҫен тытса вуламалла, унтан сапнă майлă. Туппи: **Хресчен Капкăна çырăнса илме тăрăш!** Туппине малтан тупакансене: Васçилйĕв Çемена (Шурҫа вул.), Ф. Салавтейĕва (Караҫ вул.), Павлăв Петр Семенҫа (Шупашкар) пĕрер тенкĕ те 50 шар пус премп паратпăр.

КАПКĂН

КУЛĂШЛА ШУРНАЛ

УЙĂХРА 2 ХУТ

ТУХАŤ.

Кам илес тет, кашни уйăхшăн 10-шар пус укçа йарăр. Укçа вырăнне маркăсем йарсан та йураť.

АТРĔС: Чебоксары, Конторе газеты „КАНАШ“.

Врид. ответ. редактора В. Дмитриев.

Чуваштлит № 632. Чебоксары, Тип. „Чуваш. Книга“.